26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 26 шăматкун 131(6368) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Нимӗçсен фашистла захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем тунӑ тискер ӗçсене тата вӗсем ССР Союзӗнчи граждансене, колхозсене, общество организацийӗсене, государство предприятийӗсемпе учрежденийӗсене кӳнӗ сиене тӗпчесе палӑртас тӗлӗшпе ӗçлекен

Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссире

Вӑхӑтлӑха фашистсен пусмӑрӗ айне лекнӗ совет районӗсенче нимӗçсен влаçӗсем тӑвакан тискер ӗçсем çинчен çырнӑ актсем, фашистсенчен сиен курнӑ çынсен заявленийӗсем, фашистсен тискер ӗçӗсене хӑйсен куçӗпе курнӑ çынсем кӑтартса панисем Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссие тӑтӑшах килсе тӑраççӗ.

1. Нимӗç оккупанчӗсем аваллӑх памятникӗсене пӗтерсе тӑкаççӗ, Совет Союзӗнчи халӑхсен культура пуянлӑхӗсене, наука учрежденийӗсемпе музейсене тата библиотекӑсене çаратаççӗ.

Нимӗçсен верховнӑй командованийӗ тата „хӗвелтухӑçӗнчи оккупациленӗ облаçсем тӗлӗшпе ӗçлекен имперски министр" Альфред Розенберг хушнӑ тӑрӑх ССР Союзӗнчен Германие XIV-мӗш, XV-мӗш тата XVI-мӗш ӗмӗрсенчи кӗнекесене, живописӗн, графикӑн, скульптурӑн оригиналлӑ произведенийӗсене, вырӑссемпе Хӗвеланӑç Европа мастерӗсем тунӑскерсене, турттарса каяççӗ.

1943 çулхи январь уйӑхӗнче нимӗçсен 1-мӗш танковӑй армин командующийӗ кавалери генералӗ Макензен, 1-мӗш танковӑй армин пропаганда отделӗн начальникӗ Миллер умӗнче, Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейӗнчен, Пятигорск хулине куçарса кайнӑскерӗнчен, унта Лермонтов музейӗн çуртӗнче вырнаçса тӑраканскерӗнчен, Рибейр, Рубенс, Мурильо, Иорданс, Верещагин, Коровин, Крамской, Поленов, Репин, Лагорио, Айвазовский, Шишкин художниксен чи хаклӑрах ӳкерчӗкӗсене, Донателлӑн скульптурисене тата ытти экспонатсене те илнӗ.

Аяларахра нимӗçсен влаçӗсем Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейӗнчен хаклӑ япаласене илсе тухса кайни синчен çырнӑ акта пичетлетпӗр.

«АКТ

Эпир, аяларахра алӑ пуснисем, Пятигорск хула совечӗн консультацине технически бюровӗн культсекци председателӗ Виктор Иванович Буланин, Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейӗнчи хаклӑ япаласене пӑхса усраканӗ Александр Абрамович Мытников тата „Лермонтов çурчӗ" ятлӑ литература музейӗн директорӗ Елизавета Ивановна Яковкина, çак акта аяларахра кӑтартса панӑ ӗçсем пирки çыртӑмӑр:

Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейӗнчи хаклӑ япаласене Пятигорск хулине куçарса кайнӑ пулнӑ. Вӗсем кунта 1942 çулхи январӗн 4-мӗшӗнчен пуçласа „Лермонтов çурчӗ" ятлӑ литература музейӗн çуртӗнче 1943 çулхи январӗн 7-мӗшӗччен сыхланса усраннӑ. Çакӑнтан кайран вара музей пурлӑхӗн пысӑк пайне нимӗçсен оккупаци влаçӗсем турттарса тухса кайнӑ.

Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейӗнчи хаклӑ япаласене, Дон çинчи Ростов хулинчен куçарса кайнӑскерсене—вырӑс тата Хӗвеланӑç Европа мастерӗсем тунӑ живописӑн, графикӑн тата скульптурӑн оригиналлӑ произведенийӗсене, çавӑн пекех тата вырӑссемпе ютçӗршыв фабрикисенче фарфортан тунӑ хаклӑ япаласене те, ятарласа ещӗксем ӑшне вырнаçтарса хунӑскерсене, тивӗçлӗ мерӑсем йышӑннӑ пулин те, Пятигорскран турттарса тухма май килмен, çавӑнпа та вӗсем Германи оккупанчӗсем пырса кӗнӗ вӑхӑтра Лермонтов музейӗн склачӗсенче выртнӑ.

Малтанхи вӑхӑтра Ростов музейӗн хаклӑ япалисене Германин оккупаци влаçӗсенчен Лермонтов музейӗн работникӗсем пытарса усранӑ. Сентябрӗн 7-мӗшӗнче Розенбергӑн Берлинри комиссийӗн представителӗсем Лермонтов музейӗн директорӗ патне пынӑ та, вӗсене Ростовра унти музейӗн хаклӑ япалисем Лермонтов музейӗн склачӗсенче выртни çинчен пӗлтернӗ тесе каласа, складсене уçма тата хӑйсене Ростов музейӗн хаклӑ япалисемпе паллаштарма ыйтнӑ. Çакӑн хыççӑн складсене Германи влаçӗсем хӑйсемех уçса кӗнӗ.

1942 çулхи сентябрӗн 7-мӗшӗпе 1943 çулхи январӗн 7-мӗшӗ хушшинче Макензен генералӑн армийӗнчи пропаганда отделӗн представителӗсем ещӗксене темиçе хутчен те пыра-пыра уçнӑ. Çавӑн пек уçнӑ чухне вӗсем чи хаклӑрах экспонатсене кӑлара-кӑлара илнӗ, çав ӗçсем Макензен генерал куçӗ умӗнчех пулса иртнӗ.

1943 çулхи январӗн 7-мӗшӗнче, пропаганда отделӗн начальникӗ Миллер хӑй хушнӑ тӑрӑх, хӑй умӗнчех тата Макензен генералӑн представителӗ умӗнче, 2-мӗш, 3-мӗш, 4-мӗш, 5-мӗш, 6-мӗш, 7-мӗш, 8-мӗш, 9-мӗш, 12-мӗш, 13-мӗш, 14-мӗш, 16-мӗш, 20-мӗш тата 22-мӗш номерлӗ ещӗксенчи—пӗтӗмпе 14 ещӗкри хаклӑ япаласене 12 ещӗке вырнаçтарса, Пятигорск вокзалне илсе кайнӑ, унта вӗсене вагонсем çине тиенӗ те 1943 çулхи январӗн 9-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Пятигорск хулинчен илсе тухса кайнӑ.

Акт айне çаксем алӑ пуснӑ: Пятигорск хула совечӗн консультацине технически бюровӗн культсекци председателӗ Буланин, Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейӗнчи хаклӑ япаласене пӑхса усраканӗ Мытников, „Лермонтов çурчӗ" ятлӑ литература музейӗн директорӗ Яковкина.

1943 çулхи февралӗн 24-мӗшӗ. Пятигорск хули".

Нимӗçсен фашистла захватчикӗсем Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейне çаратса пӗтерни çакна кӑтартса парать: гитлерла правительство тата нимӗçсен çар влаçӗсем оккупациленӗ районсенче вӑрӑ-хурахла ӗçсем тӑвассине хӑйсем хавхалантарса тата организацилесе пыраканӗсем пулса тӑраççӗ. Совет халӑхӗсен культура пуянлӑхӗсене çаратнӑ çӗре нимӗç генералӗсем хӑйсем хутшӑннине никам сирсе ямалла мар тӗпчесе палӑртнӑ.

2. Курск облаçӗнчи Сапогово ялӗнче нимӗç оккупанчӗсем психиатрически больницӑра выртакан пӗр пине яхӑн çынна наркӑмӑш парса асаплантарса вӗлернӗ. Çав калама çук тискер ӗç çинчен аяларахра пичетленекен документ çирӗплетсе парать:

«АКТ

1943 çулхи февралӗн 28-мӗшӗ. Аяларахра алӑ пуснисем—ӗççынни депутачӗсен Курск область Совечӗн исполком представителӗ Мальев, судпа медицина эксперчӗ—3-мӗш рангри военврач Шварц, асӑннӑ больницӑри старши медсестра Екатерина Ивановна Арефьева, çавӑн пекех тата медсестра Ирина Семеновна Ткаченко çак акта Курск облаçӗнчи Сапогово ялӗнче аяларахра кӑтартнӑ ӗçсем пирки çырнӑ:

1941 çулхи декабрь уйӑхӗнче, нимӗçсен фашистла захватчикӗсем Курск хулине, Курск облаçӗнчи районсене оккупациленӗ хыççӑнах, Сапоговӑри психиатрически больницӑра нимӗçсен çар влаçӗсем асӑннӑ больницӑри чирлӗ çынсене массӑллӑн вӗлерессине организациленӗ.

Больницӑра ӗçлекенсенчен тата вырӑнти çынсенчен ыйтса пӗлсе Комисси çакна палӑртнӑ: чирлисене хлоралгидратӑн 70 процентлӑ растворне ирӗксӗрлесе ӗçтерсе наркӑмӑшлантарса массӑллӑн вӗлернӗ.

Пӗтӗмпе больницӑра сывалса выртакан пӗр пин çынна яхӑн çавӑн пек наркӑмӑш парса вӗлернӗ.

Наркӑмӑш парса вӗлернисене, нимӗç влаçӗсем хушнӑ тӑрӑх, больница территорийӗ çинчи шӑтӑксене-бомбоубежищӗсене пытарнӑ.

Больницӑн 7-мӗш тата 9-мӗш отделенийӗсене хирӗç вырнаçнӑ çавӑн пек шӑтӑксемпе бомбоубежищӗсене чавса пӑхсан, унта вӗлернӗ çынсене массӑллӑн пытарнине тупнӑ. Çав икӗ шӑтӑкран кӑна 300-ре яхӑн çын виллине кӑларнӑ.

Чирлисене массӑллӑн вӗлерессине организацилеме 1942 çул пуçламӗшӗнче Сапоговӑна Курск хулинчи нимӗç гарнизонӗн старши врачӗ Керн ятарласа пынӑ. Çав врач нимӗçсем уйӑрса лартнӑ больница директорне Краснопольскине чирлисене мӗнле наркӑмӑшласа вӗлересси çинчен тӳрремӗнех хӑй инструкци панӑ.

Çав хӑрушӑ та тискер ӗçе хӑйсен куçӗсемпе курнӑ Пелагея Ивановна Босенко, Валентина Васильевна Машкина, больницӑн комендантчӗ Константин Никитич Филист, Екатерина Тимофеевна Гречухина тата ытти нумай çынсем каласа панӑ тӑрӑх, психиатрически больницӑра выртакан чирлӗ çынсене наркӑмӑш парса вӗлерессине 3—4 кун хушши туса пынӑ. Кунта хӑшпӗр чирлӗ çынсем, хӑйсем ӑс-тӑн тӗлӗшпе чирлӗ пулнӑ пулин те, хӑйсене наркӑмӑш парса вӗлерме хӑтланнине ӑнланса илнӗ, вӗсем хирӗç тӑнӑ, наркӑмӑш ӗçтерессинчен пӑрӑннӑ. Кун пек чухне вӗсене ирӗксӗрлесе наркӑмӑш панӑ.

Наркӑмӑш парса вӗлернӗ çынсене массӑллӑн пытарнӑ чухне виллисемпе пӗрле шӑтӑксене чӗрӗ çынсене пӑрахнисем те пулнӑ, иккӗçӗ хутчен вара шӑтӑка пӑрахнӑ чӗрӗ çынсем шӑтӑкран туха-туха тарса больницӑна таврӑннисем те пулкаланӑ, çакӑн хыççӑн вӗсене çӗнӗрен наркӑмӑш панӑ.

Хӑшпӗр шӑтӑксене тарӑн мар тата тӑрлавсӑр витсе хунӑ пирки, йытӑсем этем ӳчӗсен татӑкӗсене больница территорийӗ тӑрӑх сӗтӗрсе çӳренисем те пулкаланӑ.

Çак акта çавӑн çинчен çырнӑ та ӗнтӗ.

Акт çине çаксем алӑ пуснӑ: Мальев, Шварц, Арефьева тата Ткаченко. Курск облаçӗнчи Сапогово ялӗ".

3. Нимӗçсене Харьков облаçӗнчи Купянск хулинчен хӑваласа кӑларнӑ хыççӑн вырӑнти халӑх 8 шӑтӑк тупнӑ. Вӗсенче тискеррӗн асаплантарса тата персе вӗлернӗ 248 совет çыннине пӑрахнӑ пулнӑ. Шӑтӑксене чавса пӑхассине комисси туса ирттернӗ, комисси составӗнче çаксем: Украина писателӗ К. Гордиенко, Николаевски чиркӗвӗн протоиерейӗ священник Иоанн Протопопов, килхуçи хӗрарӑмӗ Белоцерковская, врачсем—П. Гогин, В. Кощеев, Р. Гарницына тата хула совечӗн председателӗ Тугай пулнӑ.

«АКТ

Купянск хулинчи граждансем çакӑн çинчен пӗлтерчӗç: нимӗç оккупанчӗсем Купянск хулинчи тата Купянск районӗнчи мирлӗ çынсен пысӑк ушкӑнне персе пӑрахнӑ. Советпа общество организацийӗсен представителӗсенчен, çавӑн пекех тата халӑх, чиркӳ общинин представителӗсенчен, врачсемпе медицина работникӗсен представителӗсенчен тӑракан комисси 1943 çулхи майӑн 17-мӗшӗнче Купянск хулинчи Меловая тӑвӗ патӗнчи вартилакӑма пӑхса тухнӑ та çавӑн çинчен çак акта çырнӑ:

Шӑтӑка чавса пӑхнӑ чухне, пӗр метр тарӑнӑшӗнче, Купянск хулинче тата Купянск районӗнче пурӑнакан çынсен, нимӗçсем персе пӑрахнӑскерсен, 71 виллине тупнӑ. Вӗсем хушшинче 62 арçын вилли, 8 хӗрарӑм вилли тата кӑкӑр ӗмекен ачан пӗр вилли пулнӑ. Персе пӑрахнисем пурте çара уран, хӑшӗсем çарамас та пулнӑ.

Комиссири врачсемпе медицина работникӗсем çакна тупса палӑртнӑ: персе пӑрахнӑ çынсен ӳчӗсем çинче тискеррӗн асаплантарнӑ, амантса пӗтернӗ йӗрсем пулнӑ. Хӑшпӗр çынсен аллисене тимӗр пралукпа сыхнӑ. Пӗчӗк ачан пуçне сывӑхран персе салатса пӑрахнӑ

Комисси çакна палӑртать: нумай çынсен суранӗсем вилмеллех пулман, çынсене вара чӗрӗллех шӑтӑка пӑрахнӑ пулмалла. Çакна ӑна çынсене персе пӑрахнӑ хыççӑн часах çывӑхран иртсе пынӑ граждансем те, шӑтӑк çинчи тӑпра мӗнле хускалнине курнӑскерсем тата çав шӑтӑкран тухакан йывӑррӑн йынӑшнӑ сасса илтнӗскерсем, çирӗплетсе параççӗ.

Персе пӑрахнисенчен нумайӑшӗсене вӗсен тӑванӗсем тата шӑтӑка чавса кӑларнӑ чухне пулнӑ граждансем палласа илнӗ.

Çапла, Купянск районӗнчи Гусински ялсовет председательне—37 çулхи Илларион Яковлевич Байдака, Купянск кустшвейпромӗн работницине—Елизавета Ивановна Стариковӑна, сахӑр заводӗнчи работницӑна, Заоскольский ялсоветӗн председательне—Ольга Никифоровна Берестоваяна, Заоскольски кустшвейпромра ӗçлекен çӗвӗçе—Сергей Арсентьевич Ткаченкона, заводри механика—Петр Григорьевич Карайбога, чугунçул çинче ӗçлекене—Артем Петрович Садовские, Куриловка ялсоветӗнчи „Стахановец" колхоз счетоводне—Иван Маркович Садовские, Куриловка ялсоветӗнчи „Стахановец" колхозӑн председательне—Михаил Иванович Садовские, Пристень хуторӗнчи колхознике—Иван Трофимович Бутивещенкона, Пристень хуторӗнчи колхознике—Василий Григорьевич Харченкона, Пристень хуторӗнчи колхознике—Никита Сухомлина, Кругляковка хуторӗнчи колхознике—Михаил Ильич Болдарева, Кругляковка хуторӗнчи колхознике—Иван Павлович Сулигӑна, Петровка ялсоветӗн председательне—Иван Лаврентьевич Погуляя, коопераци работникне—Иван Кириллович Мойсова, Куриловка ялсоветӗнчи „Червона Зирка" колхозӑн бригадирне—Кирилл Андреевич Ковшаре, юлашки вӑхӑтра çав колхозӑн председателӗ пулса ӗçленӗскере, Купянск çу завочӗн директорне—Даниил Иванович Буймера, Николаевка ялӗнчи колхознике—Иван Герасимович Сморошкона, Куриловка ялӗнчи колхознике—Петр Кириллович Кравченкона палласа илнӗ.

Комисси çакна палӑртать: вӗлернисенчен нумайӑшӗсене палласа илмелле марах çӗмӗрсе пӗтернӗ.

Акт çине çаксем алӑ пуснӑ: комисси председателӗ—Украина писателӗ К. Гордиенко, комисси членӗсем—хула совет председателӗ Тугай, Купянск хулинчи Николаевски чиркӗвӗн настоятелӗ Иоанн Протопопов, килхуçи хӗрарӑмӗ Белоцерковская, врачсем—П. Гогин, В. Кощеев, Р. Гарницина".

Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси çаксене тӗрӗслесе палӑртнӑ:

1) Ростоври Изобразительнӑй искусствӑсен музейне 1-мӗш танковӑй армин командующийӗ кавалери генералӗ Макензен тата 1-мӗш танковӑй армин пропаганда отделӗн начальникӗ Миллер çаратса Германие турттарса кайнӑ.

2) Курск облаçӗнчи Сапоговори психиатрически больницӑра пулнӑ чирлӗ çынсене нимӗç комендантчӗ Флях тата нимӗç врачӗ Керн хушнӑ тӑрӑх наркӑмӑш парса вӗлернӗ. Çакӑнпа пӗрлех Флях приказне мӗнле пурнӑçа кӗртсе пынине нимӗç комендатурин тӑлмачи-посредникӗ Вегеманн сӑнаса тӑнӑ.

3) Купянск хулинчи мирлӗ çынсене асаплантарассине тата пере-пере пӑрахассине нимӗçсен вӑрттӑн полицийӗн начальникӗ Карган тата унӑн заместителӗ Швайцэ панӑ приказ тӑрӑх туса пынӑ.

Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси çапла шутлать: Пятигорскра, Курскра тата Купянскра туса ирттернӗ çаратусемшӗн, мирлӗ совет çыннисене асаплантарса массӑллӑн вӗлерсе пӗтернишӗн пӗрремӗш танковӑй армин командующийӗ кавалери генералӗ Макензен, 1-мӗш танковӑй армин пропаганда отделӗн начальникӗ Миллер, комендант Флях, врач Керн, посредник—тӑлмачӑ Вегеманн, вӑрттӑн полици начальникӗ Карган тата унӑн заместителӗ Швайцэ ответлӑ пулса тӑраççӗ.

Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗн боецӗсемпе командирӗсене Америка орденӗсемпе медалӗсем парса наградӑлани

Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче США-па ССÇР-ӗн тӑшманне — гитлерла Германие хирӗç пыракан кӗрешӳре командованин задачийӗсене пурнӑçа кӗртнӗ чух паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗн чылай боецӗсемпе командирӗсене орденсемпе медальсем парса наградӑланӑ.

«Крест за боевые заслуги» ятлӑ орденпа çаксене наградӑланӑ: генерал-лейтенанта Н. Е. Петрова, генерал-лейтенанта В. И. Чуйкова, артиллери генерал-лейтенантне И. П. Камерӑна, танковӑй войскӑсен гварди генерал-лейтенантне В. М. Бадановa, генерал-майора И. А. Ласкина т. ыт. те, мӗн пурӗ 20 çынна наградӑланӑ.

«За боевые заслуги» ятлӑ медальпе 20 çынна наградӑланӑ.

«Морской крест» ятлӑ орденпа çаксене наградӑланӑ: вице-адмирала М. Е. Басистыя, контр-адмирала С. Г. Кучерова, 2-мӗш рангри капитана П. И. Фисаковича, т. ыт. те, пурӗ 10 çынна наградӑланӑ.

«За выдающуюся службу» ятлӑ орденпа 10 çынна наградӑланӑ.

Июнӗн 20-мӗшӗнче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ССР Союзӗнчи посолӗ В. Стэндли господин наградӑланӑ боецсемпе командирсем Мускавра çук пирки, Америка орденӗсемпе медалӗсене наградӑланӑ боецсемпе командирсене памалли Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарне В. М. Молотова панӑ.

США посолӗ В. Стэндли господинпа Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов пӗр-пӗрне саламласа сӑмах каланӑ. (ТАСС).

ВЦСПС-па ССР Союзӗн Наркоммясомолпромӗнче

Профсоюзсен Пӗтӗм Союзри Центральнӑй Совечӗпе ССР Союзӗн Наркоммясомолпромӗ хатӗрлӳ организацийӗсемпе предприятисенче ӗçлекенсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 çулхи май уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Сӗнтӗрвӑрринчи райзаготконторине виççӗмӗш премии памалла тунӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 24-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 24-мӗшӗнче фронтра нимӗнле палӑрӑ улшӑнусем те пулман.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнче уйрӑм участоксенче пирӗн чаçсем тӑшманӑн малти позицийӗсене пенӗ. Пирӗн артиллери нимӗçсен 8 блиндажне ишӗлтернӗ, 8 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр чаçри разведчиксен ушкӑнӗ тӑшман тӑракан вырӑна ӑнӑçлӑн кӗрсе кайнӑ. Совет боецӗсем нимӗçсен боевой хуралне вӗлерсе пӗтернӗ те 4 блиндажа сирпӗнтерсе янӑ, унтан пӗр станковӑй пулемет тытса илсе, ӑнӑçлӑнах хӑйсен чаçне таврӑннӑ. Тепӗр участокра пирӗн боевой хурал тӑшманӑн разведка тӑвакан ротин атакине сирсе янӑ.

* * *

Белгородран хӗвеланӑçнерехре вырӑнти çапӑçусем пулса пынӑ. Совет боецӗсем тӑшманӑн тӗреклетнӗ пунктне вӑркӑнса кӗнӗ те нимӗçсен 3 пысӑк дзотне тата темиçе пулемет точкине пӗтерсе тӑкнӑ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн 180 вилли выртса юлнӑ. Совет Союзӗн Геройӗ — старшина Николай Ильин ертсе пыракан 6 снайпер пирӗн оборонӑн малти линийӗ хыçӗнче 7 кун хушши засадӑра выртнӑ. Çав вӑхӑт хушшинче снайперсем 125 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Лисичанск районӗнче пирӗн артиллеристсем тӑшман тӑракан вырӑнти тӗлсене пенӗ. Тепӗр участокра нумай гитлеровец кӗрсе ларнӑ çурта пенӗ. Снарядсем тӳрӗ лекнипе вӑл çурт ишӗлсе аннӑ. Тепӗр участокра пӗр чаçӑн артиллерисчӗсем нимӗçсен 5 блиндажне вӗсенчи гитлеровецсемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн пехота нимӗç самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Карели фронтӗнчи пӗр участокра пирӗн артиллери тӑшман позицийӗсене персе тӑнӑ хыççӑн пирӗн пӗр подразделени тӑшмана вирлӗн атакӑланӑ. Совет боецӗсем 50 белофинна çити вӗлернӗ тата тӑшманӑн 5 дзотне сирпӗнтерсе янӑ.

Тӑшман самолечӗсен ушкӑнӗ пирӗн пӗр çар объектне тапӑнма хӑтланнӑ. Совет Союзӗн Геройӗ — майор Кутахов юлташ ертсе пыракан истребительсем тӑшман самолечӗсене хирӗç вӗçсе тухнӑ та вӗсен çулне пӳлсе хунӑ. Сывлӑшри çапӑçура совет летчикӗсем 4 нимӗç самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Июнӗн 19-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Украинӑри партизансен отрячӗ Чернигов облаçӗнчи чугунçул станцине тапӑннӑ. Партизансем çар комендантне тата 12 нимӗç салтакне вӗлернӗ, телефонпа телеграф станцине, водокачкӑна тата пур стрелкӑсене те сирпӗнтерсе янӑ. Çав вӑхӑтрах партизан-подрывниксен ушкӑнӗ çав станци патӗнче чугунçул çине минӑсем хурса тухнӑ. Часах тӑшманӑн 2 çар эшелонӗ партизансем хурса тухнӑ минӑсем çине пырса кӗнӗ. 2 паровоз, 8 вагон тата танксемпе автомашинӑсем тиенӗ 15 платформа çӗмӗрӗлнӗ. Партизансем хӗçпӑшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнӗ хыççӑн хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

* * *

Берлинри радио июнӗн 22-мӗшӗнче çапла пӗлтернӗ: «Совет Информаци Бюровӗ йышӑннӑ тӑрӑх, вӑрçӑн икӗ çулталӑкӗ хушшинче совет войскисем 5,5 миллион çын вилнӗ, 36 пин орудипе тата 43 пин самолет пӗтнӗ» тенӗ.

Çак пӗлтерӳ вӑл гитлеровецсен питӗ начар туса хатӗрленӗ фальшивки пулса тӑрать. Совет Информаци Бюровӗн июнӗн 22-мӗшӗнче ятарласа кӑларнӑ пӗлтерӗвӗнче çапла каланӑ: вӑрçӑн икӗ çулталӑкӗ хушшинче Хӗрлӗ Çарӑн 5,5 миллион çын мар, 4.200 миллион çын вилнӗ е пӗр хыпарсӑр çухалнӑ; 36 пин орудимар, 35 пин орудипӗтнӗ; 43 пин самолет мар, 23 пин самолет пӗтнӗ тенӗ.

Гитлерла мошенниксем хӑйсене тахçантанах никам та ӗненменнине пӗлсе тӑраççӗ. Çавӑнпа та вӗсем хӑйсен черетлӗ фальшивкинче Совет Информаци Бюровӗ çине кӑтартнӑ, çапла майпа вӗсем хӑйсене ӗнентересшӗн. Çав вӑхӑтрах гитлеровецсем, вӑрçӑн икӗ çулталӑкӗ хушшинче хӑйсен çыннисемпе хӗçпӑшалӗсене калама çук нумай çухатнӑ пирки, Совет Союзӗпе Германи фронтӗнчи вӑрçӑ ӗçӗсен итогӗсем çинчен даннӑйсем пичетлесе кӑларма хӑяйман.

Çакӑ паллӑ: Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче нимӗçсемпе вӗсен союзникӗсем икӗ çул хушшинче, вилнисемпе тыткӑна лекнисене кӑна шутласан та, 6 миллион та 400 пин салтакпа офицер çухатнӑ. Германипе унӑн союзникӗсем тӗрлӗ калибрлӑ 55.500 орудипе, 42.400 танк, 43.000 самолет çухатнӑ. Çав çухатусем çинчен ӗнтӗ гитлеровецсем нимӗн те шарламаççӗ. Анчах Берлинри шарлатансен çав фокусӗсем вӗсем Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче нимӗç çарӗ чӑннипе мӗнле çухатусем тӳснине Германи халӑхӗнчен пытараймаççӗ. Росси хирӗсенче темиçе миллион нимӗç салтакӗ вилсе выртнине нимӗç обывателӗсем те лайӑх пӗлеççӗ. Ахальтен мар халь гитлеровецсем Германири юлашки юлнӑ арçынсене, çав шутра çар ӗçне вӗрентмен стариксемпе çитӗнсе çитмен çамрӑксене те çара илеççӗ, инвалидсемпе чӑлахсене те сӑптӑрса пухаççӗ, поляксене, французсене, бельгиецсене, словаксене тата ыттисене те ирӗксӗрлесе çара илеççӗ.

Хӑйсен черетлӗ фальшивкине пичетлесе кӑларса, гитлеровецсем пӗтӗм тӗнче умӗнче хӑйсене хӑйсем сӗмсӗр мошенниксемпе суеçӗсем пулнине кӑтартрӗç.

Иосиф Сталин маршала, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председательне

МУСКАВ

Совет Союзӗнчи халӑхсем Германи агрессорне хирӗç кӗрешме пуçланӑранпа икӗ çул тултарнӑ кун эпир Француз нацине ирӗке кӑларас тӗлӗшпе ӗçлекен Комитет ячӗпе тата хамӑр ятпа Сире эпир вырӑссен паттӑр çарӗпе çав тери савӑнса хӗпӗртени çинчен пӗлтерме тивӗçлӗ тесе шутлатпӑр, çакна эпир Тунисри çӗнтерӳ пирӗн оккупациленӗ çӗршыва ирӗке кӑларма шанчӑк панӑ вӑхӑтра пӗлтеретпӗр. Француз войскисем, Америкӑпа Британи çарӗсемпе пӗрле кӗрешсе, çав çӗнтерӳре хӑйсен вырӑнне йышӑнма пултарчӗç. Тӗнчел держависен вӑйӗсене поражени тӳстернӗ çӗрте вырӑс халӑхӗн асапӗсем, совет войскисен паттӑрлӑхӗ тата вӗсен командованин тивӗçлӗхӗ мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине французсем манмаççӗ.

ЖИРО, ДЕ ГОЛЛЬ.

Унӑн Превосходительствине ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председательне И. В. Сталина

Чан Кай-ши генералиссимусӑн телеграмми

Сирӗн çӗршывӑр фашистла захватчиксене хирӗç тӑрса çапӑçма пуçлани икӗ çул тултарнӑ кун Сире, Сирӗн паттӑр Хӗрлӗ Çара тата совет халӑхне чунтан-вартан салам яратӑп.

Юлашки уйӑхсем хушшинче Хӗрлӗ Çар, хӑйӗн ӑнӑçлӑ ӗçӗсене малалла аталантарса пырса, агрессорсен хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен пысӑк йышне пӗтерчӗ кӑна мар, вӑл вӗсен чунне те чӑтайми йывӑр çапса амантрӗ. Çӗнтерӳ çинчен вӗçӗмсӗр килсе тӑракан хыпарсем Китай çарӗн воинӗсемпе манӑн çӗршывӑн пӗтӗм халӑхне хавхалантараççӗ.

Тӗнчел держависем тӑвакан усал ӗçсенче Хӗвелтухӑçӗпе Хӗвеланӑç хушшинче нимле уйрӑмлӑх та çук. Агрессорсене хирӗç пыракан кӗрешӳре пирӗн государствӑсен задачисем пурин те пӗр пек: Пӗрлешсе тӑрӑшнипе эпир тӗнчери пур вӑрӑ-хурахсене те, пӗтӗм этемлӗхӗн ирӗкне таптаса пӗтерекенскерсене, çӗр пичӗ çинчен шӑлса тасататпӑрах, часах пӗтӗм тӗнчипе тивӗçлӗ мир туса хуратпӑр, тесе хытӑ ӗненетӗп эпӗ

ЦЗЯН ЧЖУН-ЧЖЕН.

ÇАМРӐК ВЫЛЬӐХСЕМ АВАН ӲСЕÇÇӖ

ВӐРМАР. («Хамӑр корр.»). Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана ӑнӑçлӑн пурнӑçласшӑн Кӗтеснерти Партин 15-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозри ферма работникӗсем хавхаланса ӗçлеççӗ. Колхозӑн фермисенче кӑçал мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем 100 пуç, сурӑхсем 200 пуç, 160 сысна пулмалла пулсан, халӗ выльӑхсем çак хисепрен ытларах.

Кӑçал 33 ӗне пӑрулӑнӑ. Пӑрусем пурте сывӑ та самӑр çитӗнеççӗ. Ӗнесене лайӑх пӑхаççӗ, вӗсем халь сӗт нумай пама тытӑнчӗç. Талӑкра 9 литртан кая сӗт паракан ӗне çук та. И. Ломоносова пӑхакан «Женя» ятлӑ ӗне талӑкра 11 литр, «Рима» ятлӑ ӗне—10 литр; Алексеева пӑхакан «Ночка» ятлӑ ӗне—9,5 литр сӗт параççӗ.

Çавӑн пекех С. Николаев юлташ пӑхакан ӗнесем те талӑкра 10—11-шер литр сӗт параççӗ. С. Николаев юлташ çак ӗçре 10 çул хушши ӗçлет. Вӑл ӗнесене пӗлсе, юратса пӑхать. Ферма кӑçал государствӑна 3000 литр сӗт панӑ. Сӗт памалли обязательствӑна колхоз çак кунсенчех пурнӑçлать.

Кӑçал фермӑра 61 сурӑх 83 путек тунӑ. Вӗсене В. Михайлова, А. Иванова юлташсем юратса пӑхаççӗ. Иртнӗ çул вӗсем çамрӑк путексене тӗрӗс пӑхса ӳстерсе сурӑхсен йышне 170 пуçа çитерчӗç.

10 ама сысна кӑçал çурӑланӑ. Тата 7 ама çурӑламалла. Çамрӑк çурӑсем пурте ӳсеççӗ. Кӑçал пӗр сысна çури те вилмен.

Колхоз нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозниксем валли планран ирттерсе 2 сысна, пӗр пӑру çитӗнтерсе парать. Тата фронтовиксен çемьисене сысна çурисем парса пулӑшма палӑртнӑ.

Фермӑсен заведующийӗ А. Волкова юлташ выльӑхсене мӗнле пӑхнине куллен тӗрӗслесе тӑрать.

Çулсене юсамалли уйăхлăх

Çулйĕр уйăхлăхĕ вĕçленес умĕн

Июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне республика çулйĕр уйăхлăхĕн графикне 83,4 процент пурнăçланă. Елчĕк, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсем çак ĕçре организованно ĕçлесе пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче уйăхлăхра 563 çын ĕçлес вырăнне кашни куллен 573 çын ĕçлет. Асăннă районсем çулйĕр ĕçĕн графикне çак кунсенчех пурнăçлаççĕ.

Уйăхлăхра Канаш, Йĕпреç, Шăмăршă тата Чкаловски районĕсем, тӳсме çук юлса пыраççĕ. Йĕпреç районĕнче кашни куллен çулйĕр ĕçĕнче 177 лаша ĕçлемелле пулсан, ку таранччен 54 лаша кăна ĕçленĕ. Çавăн пекех Шăмăршă районĕнче те çуран 417 çын, лашапа 65 çын ĕçлес вырăнне çуран 65 çын, лашапа 23 çын кăна ĕçлеççĕ. Çулйĕр ĕçне кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ парса тăман пирки, уйăхлăхăн графикне те 50 процента яхăн çеç пурнăçланă.

Çулйĕр ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ТĂВАЙ. Июнĕн 18-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри чылай колхозсем çулйĕр уйăхлăхне активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Çак ĕçе уйрăмăнах «Красная Чувашия» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем массăллăн тытăнса, уйăхлăх заданине 80 процент пурнăçларĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхозран кашни кунах çулйĕр ĕçĕнче 46 çын, 17 лаша ĕçлеççĕ. Çулйĕр ĕçĕн бригадирĕ коммунист П. Иванов юлташ бригадăри ĕçе аван йĕркеленĕ. Çак бригадăра ĕçлекенсем А. Никифорова, С. Иванова, Е. Измайлова, М. Алексеева, А. Григорьева, А. Кузьмина юлташсем кашни кунах ĕç графикне 130—150 процента çитиех пурнăçлаççĕ.

«Красная Чувашия» колхозран кашни кунах 55 çын, 12 лаша ĕçлеççĕ. Колхоз уйăхлăх графикне июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулнă.

Анчах та районра «Çĕлтĕр», «Çулăм», Смидович тата Максим Горький ячĕсемпе тăракан колхозсем çулйĕр ĕçне халĕ те тытăнман-ха.

Смидович ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Орлов юлташ) çулйĕр ĕçĕнче 60 çын кăна ĕçлет. Бригадир П. Кайсаров юлташ çулйĕр ĕçĕнче тухăçлăн ĕçлессишĕн тăрăшмасть. Июнĕн 16-мĕшĕнче вăл 18 çынна пĕр сăлтавсăр киле яма пănă. Ку ĕçе ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Салмин юлташ хутшăннипе çеç йĕркеленĕ.

«Çĕлтĕр» колхозран (председателĕ Казаков юлташ) çулйĕр ĕçĕнче 24 çын, 7 лаша çеç ĕçлет.

А. КАХОВСКИЙ.

ХĔРЛĔ ЯЛАВА ХАМĂР АЛĂРАН ВĔÇĔРТМЕСТПĔР

Канашри «Красный воин» артель, май уйăхĕнче социализмлă ăмăртура мала тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Артель коллективĕ çак пысăк награда çине тата тухăçлăрах ĕçленипе ответлет. Кашни рабочипе работница, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, кулленхи задание икĕ-виçĕ хут ӳстерме пултарчĕ. Эпир иккĕмĕш çур çулта та Хĕрлĕ Ялава хамăр аллăрах тытса тăрассишĕн вăй-хала хĕрхенмесĕр ĕçлетпĕр, теççĕ вĕсем.

М КОРЧАГИН,
Артель правленийĕн председателĕ.

ĂМĂРТĂВА ОРГАНИЗАЦИЛЕМЕН

ВĂРМАР. **(«Чăваш КоммУни» кОрр.).** Кивĕ Вăрмарти «Универсал» промартель (председателĕ В. Семенов) районри ытти артельсенчен кая юлса ĕçлет. Артель 1-мĕш квартал планне тултарайман. Апрель уйăхĕнчи ĕç планне 95,6 процент, май уйăхĕнче вара плана мĕнпурĕ те 67 процент çеç пурнăçланă.

— Мĕншĕн артель коллективĕ хăйĕн планне пурнăçлаймасть?—тесе ыйтрăмăр эпир промартель председателĕнчен Семенов юлташран.

— Ĕçлеме условисем те çителĕклĕ ĕнтĕ. Анчах темшĕн рабочисем кулленхи ĕç нормисене тултарса пыраймаççĕ, —тесе ответлет Семенов юлташ.

Чăн та, артель коллективĕн ĕç планне тултарса пыма пур майсем те пур. Анчах рабочисемпе работницăсенчен çурри ытла хăйсен нормисене тултарса пыраймаççĕ. Известь туса хатĕрлекен цехри (начальникĕ Ф. Петров), атă пушмаксем юсакан цехри (начальникĕ И. Краснов) рабочисем хăйсен нормисене çурри те пурнăçлаймаççĕ.

Çакă вал рабочисемпе работницăсем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе кирлĕ пек туса пыманнинчен те нумай килет. Артель коллективĕ май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнасси çинчен сӳтсе явнă та урăх нимĕн те туман.

Артельре кашни рабочи куллен мĕн чухлĕ ĕçленине шута илсе пымаççĕ, ĕçре хăш рабочи мала пулнине е кая юлнине палăртмаççĕ.

— Кашни рабочи, кулленхи нормăна миçе процент тултарса пынине эпĕ калама пултараймастăп. Эпир рабочисем мĕнле ĕçленине уйăх пĕтнĕ хыççăн çеç пăхса тухатпăр,—тет артель председателĕ Семенов.

Малта пыракан рабочисен ĕçне хаклама, вĕсен опычĕсемпе ытти рабочисене паллаштарма кăтарту хăми организацилемен.

Артельре стена хаçачĕ те тухмасть, рабочисене куллен хаçатсем вуласа кăтартмаççĕ.

Çак çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, уйăхри плана иртерсе тултарассишĕн кĕрешмелле.

В. ВЕСЕЛОВ.

Республика уйхирĕсенче

Çуракинче мала тухнисене Хисеп хăми çине кĕртнĕ

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ тăратнă материалсем тăрăх, çуракинче отличнo ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн Шупашкар районĕнчи «Крахмал» колхозри организацине, Чкаловски МТС-ри хĕрарăм трактористкăсен бригадине, Елчĕк МТС-ĕн трактористкине Лидия Уткинăна тата Калинино районĕнчи «Броневик» колхозри сухаçа Николай Блинова Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Комсомолăн «Крахмал» колхозри организацийĕ (секретарĕ Дмитриева юлташ) çуракине иртерес ĕçе активлăн хутшăннă. Колхоз 6 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Организацири 12 комсомолецран кашниех ĕç нормисене кулленех ирттерсе пурнăçласа пынă.

Чкаловски МТС-ри хĕрарăм трактористкăсен бригади (бригадирĕ Ситов юлташ) 316 гектар сухалас вырăнне 366 гектар сухаланă. Лидия Уткина «СХТЗ» тракторпа 35 гектар сухалас вырăнне 75 гектар сухаланă, 50 килограмм горючи перекетленĕ. Николай Блинов кулленех 1,5—2 норма тултарса пынă.

Утă çулса пĕтернĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. **(Телефонпа).** Хăшпĕр колхозсем кунта хĕрсех утă çулаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тăваттăмĕш кун, «1-ое мая» колхоз виççĕмĕш кун çулаççĕ. «Плодопитомник» колхоз пĕр арне каярах утă çулма тухса кĕске вăхăтрах пысăк пахалăхпа çулса пĕтерчĕ.

Халĕ ку колхозсем çулнă пек утта типĕтсе пыраççĕ, государствăна лайăх утă пама хатĕрленеççĕ.

В. КУЗЬМИН.

Утă çулакансем валли столовăй уçнă

ЭЛĔК. **(Хамăр корр.).** Çак кунсенче уйрăм колхозсем утă çулма пуçлаççĕ. «Серп и молот» колхоз 3 кун хушшинче 8 гектар клевер çулчĕ. Çавăн пекех «Красное знамя» колхоз та 10 гектар утă çулнă.

Киров ячĕпе тăракан тата «Надежда» колхозсем утă çулма июнĕн 24-мĕшĕнче тухрĕç. «Надежда» колхоз утă çулакансем валли ятарласа столовăй уçнă.

Тырпулсене пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленеççĕ

КАНАШ. **(Хамăр корр).** Çĕнĕ Мамири «Красноармеец» колхоз (председателĕ Ефремов) уборкăна тĕплĕн хатĕрленет. Çак кунсенче пĕр жнейкăпа косилка; 14 урапа юсанă, çĕнĕрен 8 стан урапа илнĕ, 35 михĕ хатĕрленĕ, 12 çава çумне кĕреплесем туса майлаштарнă.

Уборка вăхăтĕнче пĕрлешӳллĕ столовăй пулать. Ун валли 10 тонна çăнăх тата ытти продуктсем хатĕрленĕ.

Колхоз тырă вырса, çапса пуçтарас ĕçе ирттерме план тунă. План тăрăх колхоз кĕрхи тырăсене 8 кун хушшинче, çурхи тырăсене 12 кун хушшинче вырса пуçтармалла, авăн çапассине тырă вырма тухсан виççĕмĕш кунĕнчех тытăнмалла, государствăна тырă парса татас ĕçе срокчен пурнăçлама палăртнă.

Колхозниксем уборкăна хатĕрленнĕ май ытти ĕçсене те хăвăртрах вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Паянхи куна 30 гектар çĕртме тунă, 40 гектар çинче çум çумланă. Колхоз йышĕ пысăк мар. Кунта пурĕ те пĕр бригада çеç. Колхозниксем пĕр çемьери пек мĕнпур ĕçе пĕрле тăрса, хастарлăн тытăнаççĕ, ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Т. Исаева, Ю. Егорова, О. Алексеева колхозницăсем колхозра паллă стахановкăсем шутланаççĕ. Чăнах та стахановла ĕçлеççĕ вĕсем; пĕр ĕçрен те юлмаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вĕсем 1943 çулта 5 уйăх хушшинчех 90—115-шер ĕçкунĕ тунă.

Çумкурăксене пĕтересси

Çумкурăкĕсем ялхуçалăхĕшĕн усал тăшмансем пулса тăраççĕ. Вĕсем культурăллă курăксен чи кирлĕ апатне, нӳрĕлĕхе тата çутта туртса илеççĕ. Çанталăк хăй вĕсене чăтăмлă тунă, çавăнпа вĕсем çанталăкран килекен йывăрлăхсене çăмăллăнах тӳссе ирттереççĕ. Культурăллă ӳсентăрансенчен вĕсем темиçе хут ытларах ӳсеççĕ, хунаççĕ. Утмăл туратăн пĕр туни çулталăк хушшинче 6.000 вăрă, пиçен 19.000 вăрă, пухра 50.000, мăян 100.000 вăрă хунатарма пултарать.

Анчах çумкурăкĕсем вăрăран кăна мар, тымарĕсенчен те хунаççĕ. Наука кăтартнă тăрăх, шурут тымарĕсем пĕр гектар çинче 1000 километр тăршшĕ пулаççĕ, йывăрăшĕ вĕсен пĕр тоннăна çитет. Ун тымарĕн кашни 10—15 сантиметрĕ тăршшĕнче папкасем пулаççĕ, çав папкасенчен кашни хăй хунав кăларма пултарать.

Çумкурăкĕпе кĕрешме йывăр, анчах кĕрешмелле. Тырпул вăрлăхĕ çине лекнĕ çумкурăкĕн вăррисене эпир сортировкăпа тасататпăр, анчах та кирлĕ пек тасатса çитерейместпĕр.

Çĕмĕрле районĕнчи вăрлăх лабораторийĕнче тĕрĕслесе тухнă тăрăх, „Красноармеец" колхозăн тасатнă сĕллин пĕр килограмĕ çинче 171 çумкурăк вăрри, Ленин ячĕпе тăракан колхозăн сĕлли çинче 152 вăрă тупнă. Пĕр гектар çĕр лаптăкĕ çине эпир 2 центнер сĕлĕ акатпăр пулсан, сĕлĕпе пĕрлех çапла вара çумкурăкĕн 30.000 ытла вăрине акатпăр.

Çумкурăкĕсем çĕрулми çинче те сахал мар. Вĕсене çине тăрсах пĕтерсе пымалла. Ăçта, мĕнле культура çинче çумкурăкĕсем пур, вĕсене пĕр курăк хăварми çумласа тасатмалла. Анчах та республикăри нумай колхозсенче ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ-ха. Июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсене пĕтĕмпе те 38,8 процент чухлĕ, техникăллă культурăсене 34,9 процент чухлĕ, тымарçимĕçсене 4—5 процент чухлĕ кăна çум курăкĕсенчен тасатнă.

Пуринчен ытла Йĕпреç, Красноармейски, Çĕмĕрле, Первомайски районĕсем кая юлса пыраççĕ.

Çум çумлама халь кая мар-ха, çавăнпа ку ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пымалла. Хăшпĕр вырăнсенче çумкурăксем сахалтарах шăтнă пулин те, вĕсене пурпĕрех çумласа тасатмалла. Хăшпĕр çумкурăкĕсене çумламасан, вĕсем кăçал сайрарах пулсан та, килес çул хунаса кайма пултараççĕ, çавăнпа вĕсене тымарĕпех кăкламалла. Çум çумланă чухне хăвпа пĕрле ятарласа йывăçран тунă çĕçĕ е ун евĕрлĕ япала пултăр, вĕсемпе çумсене пĕтĕм тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа кăларма çăмăл. Темиçе хут çумличчен пĕр хут тĕплĕн çумлани усăллăрах, анчах çĕнĕрен шăтса тухакан çумкурăксене татах та тепĕр хут çумламаллах.

Кунсăр пуçне тырă вырнă чухне те çав çумсем çинчен манми юрамасть. Тырă вырнипе пĕрлех çумкурăксене те тăпăлтарса пымалла.

Агроном М. САРРЭ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Организаци ӳсет

ВĂРМАР. **(«Чăваш КоммУни» корр.).** Комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан пысăк задачăсенчен пĕри вăл —комсомолецсен ретне кунран-кун ӳстерсе пырасси пулать. Çакна лайăх ăнланса илсе, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Вăрмар районĕнчи ВЛКСМ райкомĕ комсомол йышне чылай ӳстерчĕ.

1943 çулта комсомол ретне районĕпе 322 çамрăка илнĕ. Ленинла-Сталинла комсомол ретне фронтра тата тылра хăйсен пултарулăхĕсене кăтартнă, тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен сыхлассишĕн хăйсен пĕтĕм вăйне тата пурнăçне пама хатĕр тăракан çамрăксем кĕреççĕ.

Комсомол ретĕ уйрăмăнах çак юлашки вăхăтра ӳсрĕ. Апрель уйăхĕнче 75 çамрăка, май уйăхĕнче 52 çамрăка, июнь уйăхĕн малтанхи эрнинче 10 çамрăка комсомола илнĕ. Комсомолăн МТС-ри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Чернов юлташ) 1943 çулта трактористсемпе сухаçăсене 43 çынна комсомол ретне илнĕ.

Комсомолăн Паттири «Заря» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ В. Яковлев юлташ) кăçал комсомол ретне 10 çамрăка илнĕ. Çамрăк патриотсем комсомол ретне кĕнине фронтшăн, çĕнтерӳшĕн стахановла ĕçленипе паллă тăваççĕ. Ку колхозра пурĕ 25 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Çураки вăхăтĕнче кунта комсомолецсен бригадине организациленĕ. Бригадăна комсомолец С. Васильев ертсе пынă, вăл комсомолецсене ĕçе активлăн мобилизациленĕ. Çуракинче çав бригада мала тухнă. Çамрăк комсомолец Виноградов, акакан пулса ĕçлесе, кулленех ĕç нормине 200 процент тултарса пынă.

Комсомолецсен паха ĕçĕсене курса, комсомол ретне кĕме 10-шар çамрăк заявленисем панă.

Комсомолăн «Атнаш» колхозри (секретарĕ И. Васильев), Шăхальри вăтам шкулти (секретарĕ М. Степанова) пуçламĕш организацийĕсем те комсомол ретне ӳстерес тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç.

Анчах та хăшпĕр организацисем çак тĕлĕшпе халĕ те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Пĕчĕк Енккассинчи пуçламĕш организацире (секретарĕ Краснова) кăçалхи 5 уйăх хушшинче комсомол ретне пĕр çынна та илмен. «Кĕтне» колхозри организаци те (секретарĕ Чесноков) кăçал хăйсен ретне пĕр çамрăка та илмен. Кив Вăрмарти «Большевик» колхозра (секретарĕ Ильин) комсомола пĕр çамрăка çеç илнĕ.

Комсомол йышне ӳстерес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле.

Вутă хатĕрлеççĕ

КАНАШ. Педучилищĕн кăçал хĕл валли 300 кубометр вутă хатĕрлемелле. Педучилище коллективĕ июнĕн 21-мĕшĕ тĕлне 225 кубометр ытла вутă касса хатĕрлерĕ. Ку ĕçре вĕренекенсем тăрăшса ĕçлерĕç. Виççĕмĕш класра вĕренекен ачасем Разумов, Григорьев, Кузьмин тата ыттисем те нормăна икĕ хут тултарса ĕçлерĕç. Çак кунсенче кунти коллектив кирлĕ таран вутă хатĕрлесе çитерет.

Районри шкулсенче вутă хатĕрлес ĕç начар пырать-ха. Сиккассн, Карăклă, Шăккăл шкулĕсем ку ĕçе халĕ те тытăнман

И. МАКСИМОВ.

Нимĕçсенчен 1941-1943 çулсенче тытса илнĕ хĕçпăшал тĕслĕхĕсен выставки уçăлнă

Июнĕн 22-мĕшĕнче Мускавра нимĕçсенчен 1941—1943 çулсенче пулса иртнĕ çапăçусенче тытса илнĕ хĕçпăшалсен выставки уçăлнă. Выставкăна, отечественнăй вăрçă пуçланни икĕ çул тултарнă кун уçăлнăскере, уçăлнă кунах темиçе пин çын пырса курнă.

Хамăр тăван çĕршывшăн, Хĕрлĕ Çаршăн патриотла пĕтĕм чунтан савăнса, выставкăна пынă çынсем хальхи вăхăтра мĕнпур хĕçпăшалсен тĕслĕхĕсемпе паллашнă. Çав тĕслĕхсем вĕсем пирĕн Хĕрлĕ Çар пур çĕрте те — Мускав çывăхĕнче те, Сталинград патĕнче те, Ленинград çумĕнче те тата отечественнăй вăрçăн ытти фрончĕсенче те тунă çапăçусем, çĕнтерӳллĕ çапăçусем çинчен аступтараççĕ.

Нимĕçсен тем пысăкĕш «Фокке-Вульф—200» йышши бомбардировщикне выставкăн авиаци пайне кĕнĕ çĕрте кăларса лартнă. Курма пынă çынсем машинăсене нумайччен пăхаççĕ, анчах та пуринчен ытларах вĕсем çав машинăсем çинчи шăтăк-çурăксене пăхаççĕ, ку шăтăк-çурăксем совет летчикĕсен вăрçăри мастерлăхĕ çинчен пĕлтереççĕ.

Выставкăн сулахай флангĕнче нимĕç танкĕсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Тăшмансенне икĕ çул хушшинче 42.400 танк тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă. Çав танксен тĕслĕхĕсене ху куçупах курсан, çав тем пысăкĕш цифрăсен шутне лайăхрах тавçăрса илме пуçлатăн, тăшмана çав тери пысăк çухатусем кӳме мĕн чухлĕ вăй кирлине уçăмлăрах пĕлме пуçлатăн.

Выставкăн артиллери аллейĕнче 150 оруди ытла кăларса лартнă, унта темиçе тĕрлĕ конструкциллĕ орудисен тĕслĕхĕсем те пур, танксене пемелли 20 миллиметрлă пушăран пуçласа 305 миллиметрлă мортирăна çити пур. Курма пынă çынсем экспонатсем умĕнче нумайччен чарăна-чарăна тăраççĕ, экскурсине ертсе çӳрекенсен сăмахĕсене тимлĕн итлеççĕ.

Пĕр павильонра выставкăна пынă çынсем нимĕçсен куçса çӳрекен пехотин техникипе паллашаççĕ. Кунта «Адлер» тата «Триумф» йышши мотоциклсене, нимĕçсен «Фатерланд» йышши румынсен «ВД» маркăллă; итальянецсен «Шабрини» йышши велосипедĕсене кăларса тăратнă.

Выставка территорийĕнче курма пынă халăх иркине 10 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетченех лăк тулли пулчĕ. Вĕсем нумайĕшĕ хăйсем курни вĕсене мĕнле кăмăла кайни çинчен тата хăйсем мĕн сунса хăварнине кĕнеке çине сыра-сыра хăварнă:

«Пурте килсе пăхăр, — тесе çырать пĕри—пурте курăр, епле чее тата вăйлă тăшманпа кĕрешет пирĕн халăх, пирĕн Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче. Ку вăл йывăр та хаяр кĕрешӳ. Çапах та вăл кĕрешӳре эпир çĕнтерсе пынă, çĕнтерсе пыраттăр; вĕçне çитиччен çĕнтерĕпĕр!» — тет. Ыттисем те çав шухăшах çырса хунă. (ТАСС).

„Совет Союзĕн аслă отечественнăй вăрçи çинчен"

И. Сталин кĕнекин виççĕмĕш кăларăмĕ

Политика литературин государство издательстви И. Сталинăн «Совет Союзĕн аслă отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине виççĕмĕш хут кăларнă.

Ку кĕнекене Сталин юлташăн Совет Союзĕн отечественнăй вăрçи вăхăтĕнче пичетленсе тухнă выступленийĕсемпе приказĕсене пурне те кĕртнĕ. Кĕнекен çак виççĕмĕш кăларăмне иккĕмĕш кăларăмĕ тухнă хыççăн пичетлесе кăларнă çĕнĕ документсене те кĕртнĕ.

Кĕнекен ку кăларăмне 5 миллион экземпляр пичетленĕ. (ТАСС).

Нимĕç самолечĕсем Ленинград çывăхĕнчи халăх пурăнакан пунктсене тапăнни

Июнĕн 23-мĕшĕнче каçхăрла нимĕç самолечĕсен темиçе ушкăнĕ Ленинград çывăхĕнчи халăх пурăнакан икĕ пункта тапăнма хăтланнă. Пирĕн истребительнăй авиаци тăшман самолечĕсене хирĕç çĕклене тухнă та, çапăçма тытăнтарса, вĕсене çав объектсем патне вĕçсе çитиччен сапаласа янă. Тăшманăн уйрăм самолечĕсем бомбăсене ним йĕркесĕр пăрахса хăварса, пысăках мар сиен кӳнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери 19 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ. Англи самолечĕсен соединенийĕсем, июнĕн 21-мĕшĕнче Кăнтăр Германири Фридрихсхафен хули çине пĕр сухату тумасăр бомба пăрахнăскерсем, çавăн хыççăн Çурçĕр Африкăри базăсене анса ларнă пулнă. Июнĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вара, вĕсем Италин Специя ятлă тинĕс-çар базине вĕçсе пырса тапăннă та хăйсен Англири базисене таврăннă. Малтанхи хыпарсем тăрăх, вĕсем Специри доксем çине бомбăсене тĕллесех пăрахнă. Нефтехранилищăсене вут хыпса илнĕ. Англи бомбардировщикĕсем кунтан та хăйсен базисене пĕр çухатусăрах таврăннă.

Июнĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Сицилири Комизо аэродромне вĕçсе пырса тапăннă. Çав каçхинех «Веллингтон» йышши бомбардировщиксем Ольбири докĕсем çине (Сардини) бомбăсем пăрахнă.

Июнĕн 23-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Меольтари тĕрлĕ объектсене атакăланă. Çавăн пекех тата Монертюри аэродромпа Сент-Омер çине те (Франция) бомбăсем пăрахнă.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔ ГУЛЛЬ ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшманăн 15 самолечĕ ытла Гулль хулине тапăннă. Пурлăх тĕлĕшĕнчен кăштах сиен кӳнĕ. Темиçе çынна вĕлернĕ. Бомба тивнипе музей çунса кайнă; хаклă экспонатсем пĕтнĕ.

АНГЛИ КОРОЛĔ ТРИПОЛИНЕ ПЫРСА КАЙНА

ЛОНДОН, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи королĕ Мальтăна пырса кайнă хыççăн Триполине пынă. Кунта вăл пысăк парада йышăннă. Парада Англин, Кăнтăр Африкăн, Çĕнĕ Зеландин, Судан çар чăçĕсем тухнă. Парадра Францие США-н сывлăш-çар флотĕнчи чăçсем те пулнă.

ИТАЛИН ШАЛТИ ПОЛИТИКИНЧЕ ЙЫВĂРЛĂХСЕМ ЫТЛАХ ТА ÇИВĔЧЛЕНСЕ ПЫРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире тухакан «Пестер Ллойд» ятлă хаçатăн Римри корреспонденчĕ çырса пĕлтернĕ тăрăх, Италире пурнăç питĕ йывăрланса çитнĕ. Итали халăхĕ çĕнтерес шанчăка ытларан ытла çухатса пырать, çавăнпа та фашистла хаçатсен кунпа мĕнле кĕрешмелли çинчен тĕрлĕрен статьясем çырма тивет. Сăмахран, «Джорнале д'Италиа» хаçат çапла çырать: вăрçăпа фашизма хирĕç пĕтĕм çĕршывĕпех тĕрлĕ листовкăсем пухса сараççĕ. «Намăслантаракан сăвăсенче» Муссолинипе унăн çывăх çыннисем çинчен мăшкăлласа кулаççĕ. Çĕнтерес шанчăка çухатнă шухăш-кăмăлсене çарнине хирĕç фашистла чиновниксем те нумайĕшĕ кĕрешме хăяймаççĕ, тесе пăшăрханать хаçат.

Çав «Пестер Ллойд» хаçат корреспонденчĕ асăрхаттарнă тăрăх, Итали вăрçăра умлă-хыçлă поражени тӳссе пыни пĕтĕм çĕршыв пурнăçне, уйрăмах столица пурнăçне, апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен пĕтесси патнех илсе çитернĕ. Транспорт начар ĕçленине пула апат-çимĕçе тĕрлĕ районсене вăхăтра илсе çитерейменççĕ. Римра магазинсем умĕнче тем тăршшĕ черетсем тăраççĕ. Черетри çынсем норма тăрăх илме тивĕç продуктсене мĕн чухлĕ те пулин илесшĕн антăхаççĕ, анчах ăна та илеймеççĕ.

Бомба пăрахакан районсенче сутуилӳпе снабжени пачах йĕркерен тухнине Итали хаçачĕсем халĕ ĕнтĕ пытарма та тăрăшмаççĕ. Суту-илӳ предприятийĕсенче ĕçлекенсем ытти халăхпа пĕрлех ĕçĕсене пăрахаççĕ те хăрушсăртарах районсене тараççĕ.

Хулара çинмен апат-çимĕç продукчĕсене вăйпа тытса илме яла тĕрлĕ отрядсем яраççĕ, анчах Итали хресченĕсем вĕсене хирĕç тăраççĕ: хирти тырăсене тĕртсе çунтараççĕ е вăрласа пĕтереççĕ. Кун йышши саботажпа кĕрешме ятарласах полици отрячĕсем тăваççĕ.

Колхозри пуçарулăх çинчен

Фабрикăсемпе заводсенче рационализаторла сĕнӳсем нумай пухăнаççĕ. Вĕсене пурнăçа кĕртсе, предприятисем производствăна пĕрмаях лайăхлатса пыраççĕ, çав сĕнӳсене пурнăçа кĕртнинчен пысăк усă илеççĕ, миллионшар тенкĕ укçа, тĕрлĕ япаласем перекетлесе хăвараççĕ.

Рационализаторла сĕнӳсем пухас тĕлĕшпе фабрикăсемпе заводсенче парти, комсомол тата профсоюз организацисем нумай ĕçлеççĕ. Колхозсенче вара çакна сахал тĕл пулма пулать. Çавăнпа та колхозри пуçарулăх çинчен сăмах тапратни питех те вырăнлă пулĕ тесе шутламалла.

* * *

... Эсир Комсомольски районри ялсем витĕр тухатăр. Кашни ялтах ытти суртйĕрсем хушшинче пĕр-икĕ шурă сурт курăтăр, вĕсене шурă тăмпа шуратса лартнă.

Мĕнле суртсем-ха вĕсем? Мĕн пирки вĕсене шуратса лартма кирлĕ пулнă?

Çак ыйту çине ответ илес тесе, «Большевик» колхозăн ĕне фермине кайса пăхар.

Пĕлтĕр колхоз ĕнесем, пăрусем тата сурăхсем валли çĕнĕ витесем туса лартнă. Вĕсене улăмпа çеç мăкланă. Çавăнпа, витесем çĕнĕ пулнă пулин те, вĕсенче сивĕ пулнă, уйрăмах çамрăк выльăхсене хĕл каçарма йывăр пулнă.

Çакăнта вара пуçарулăх кирлĕ пулнă. Вăл пуçарулăх тупăннă. Ферма заведующийĕ Сергей Константинович Щетинин юлташ витесене тăмпа сĕрсе лартма хушнă. Тăмне çапла хатĕрленĕ: пĕр лав ĕне тислĕкĕ, пĕр лав шурă тăм тата тепĕр лав хăйăр илсе хутăштарнă та ăна лайăх çăрса хатĕрленĕ. Вара вите стенисене çав тăмпа шăлса лартнă.

Эпир парти райкомĕн секретарĕпе Георгиев юлташпа фермăн витисене пăхса тухрăмăр. Тӳрех калас пулать, витесене тăмпа сĕрсе лартни питех те кăмăла кайрĕ. Тăм лайăх тытсе ларнă, хăпăнса ӳкес хăрушлăх çук. Эпир шаккаса та пăхрăмăр, анчах тăм хăпăнмарĕ, сирĕп штукатурка пек тытăнса тăрать. Паллах, хĕлле ку витесене çил кĕрсе тухаймĕ, выльăхсене ăшă пулĕ.

Çак пуçарулăха ВКП(б) райкомĕ вăхăтра хакланă. Июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче районри фермăсен заведующийĕсене «Большевик» колхозăн ĕне фермине пухнă та тăмпа шăлса лартнă витесене кăтартнă, тăма мĕнле хатĕрлемелли çинчен каласа панă. Сӳтсе явнă хыççăн, çак пуçарулăха пурте ырланă. Вара районра вăл пуçарулăх хăвăрт сарăлма тытăннă.

Комсомольски районри ялсем витĕр тухнă чухне эсир ытти суртсем хушшинче шурă тăмпа шуратнă суртсем куратăр. Вĕсем—хĕлле ăшă пултăр тесе тăмпа шăлса лартнă витесем.

* * *

«Большевик» колхозри тимĕрç лаççинче жнейкăсене юсаççĕ. Çамрăк тимĕрçĕсем васкаççĕ, хăш машинăн мĕн çитменнине тĕрĕслеççĕ.

Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн вĕсем çакна палăртнă: машинăсене пурне те юсама тивет, вĕсен вкладышĕсене, валикĕсене улăштармалла т. ыт. те. Анчах... çав вкладышсемпе валиксене ăçтан тупмалла-ха? Вĕсене халĕ хуларан килсе парасса кĕтсе лармалла-и? Унта халĕ фронта кирлĕ япаласем тума тăрăшаççĕ вĕт-ха?

Çакăнта ĕнтĕ калллех пуçарулăх кирлĕ. Вăл пуçарулăх ака мĕнре пулмалла.

«Большевик» колхозри тимĕрç лаççинче запаслă пайсем нумай. Вĕсем хушшинче вкладышсем те пур. Анчах колхозăн жнейкисене Первомайски заводра туса кăларнă, вкладышсем вара Люберцăри заводра тунăскерсем. Çавăнпа та вĕсемпе усă курма май çук. Çак вăхăтрах тепĕр колхозра, сăмахран çак районри «Пролетарий» колхозра, Люберцăри завод туса кăларнă жнейкăсене юсама вкладышсем çук. «Большевик» колхозра вĕсем усăсăрах выртаççĕ. «Большевик» колхоз «Пролетарий» колхоза пулăшнă пулсан, колхозниксене те, государствăна та пысăк усă панă пулĕччĕ. Çак вăхăтрах тепĕр колхозра Первомайски завод туса кăларнă вкладышсем ахалех выртаççĕ пулĕ, çав колхоз вара «Большевик» колхоза пысăк пулăшу пама пултарнă пулĕччĕ.

Колхозсен хуçалăхĕнче, уйрăмах тимĕрç лаççисем патĕнче, тимĕр таврашсем выртнине яланах курма пулать. Çав япаласем сирĕн колхоза кирлĕ мар, çавăнпа вĕсем йăванса çӳреççĕ. Сирĕнпе юнашар колхоза вĕсем питĕ кирлĕ, анчах вĕсем унта çук. Çав вăхăтрах юнашар колхозра сире кирлĕ япаласем йăванса выртаççĕ пулĕ. Вĕсене шухса илсен эсир пĕр-пĕрне пысăк пулăшу пама пултаратăр. Сире кирлĕ запаслă пайсем тупăнма пултараççĕ.

Çакăн пек пулăшасси вара халĕ çителĕклĕ пулса пырать теме çук-ха.

* * *

Вăрçă вăхăчĕ пуçарулла, савăнасулла пулма хушать. Çакна ĕнтĕ уйрăмăнах колхоз руководителĕсемпе мĕнпур колхозниксен асра тытмалла. Сăмахран, «Большевик» колхозри ĕне фермине ĕçлекенсен пуçарăвне йышăнса илсе, республикăри пур колхозсенче те витесене ăшă тытакан туса çитерсен, эпир темиçе пин выльăх-чĕрлĕхе сыхласа хăварса, миллионшар тенкĕлĕх усă курма пултаратпăр. Тырă вырмалли машинăсене юсас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса, тырра хăвăрт тата тăкаксăр пухса кĕртсе эпир пиншер пăт тырă упраса хăварма пултаратпăр. Ака мĕнле усă пама пултарать колхозниксен пуçарулăхĕ!

Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн колхозсенче пуçарулăх вăйлă пулни кирлĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем пиншер те миллионшар тенкĕ тăракан рационализаторла сĕнӳсем парччăр.

В. ЯКОВЛЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Калинин урамĕнчи квартал комитечĕн активĕ ĕççынни депутачĕсен Шупашкар Хула Совечĕн депутатне Антонина Васильевна Черпаковăна унăн упăшки

Вячеслав Петрович Черпаков

вăхăтсăр вилни пирки квартал активĕ те чунтан хурланса хуйхăрни çинчен пĕлтерет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. б. 53 84 п. л.